78Ч2. 85.313.0
К 3-15
23002-чув

# ЙĂВАШКЕЛ ЮРРИСЕМ



Национальная библиотека ЧР
4-023002

23002

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

г. Чебоксары, типография № 1. 1979 г. Заказ № 2079.

85.313.0
кф
К 7862
З-15

# ЙĂВАШКЕЛ ЮРРИСЕМ

Яков ЗАДОРОВ
пухса хатĕрленĕ

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1979

85 ЗЧУВ
З15

23002 - чув

Чувашская
республиканская
библиотека
им. М. Горького

**Задоров Я. А.**

З15 Йăвашкел юррисем: — Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1979.— 48 с. 20 п.

Тутар республикинчи Çарăмсан районĕнче 1917 çулта çуралнă Яков Алексеевич Задоров учитель-пенсионер — чăваш халăх юррисене пухакан чи хастар фольклористсенчен пĕри. Вăл Йăвашкел ялĕпе Çарăмсан, Сулча тата Сĕнчел шывĕсем тăрăхĕнчи чăвашсен йăла-йĕрке юррисене пухса хатĕрленĕ. Çав юрăсенчен хăшĕ-пĕрипе паллаштаратпăр эпир çак кĕнекере.

З $\frac{0934-152}{М136(03)-79}$ 141—79

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1979 ç.

ПРОВЕРЕНО
2010
12 ИЮЛ 2017

# 1. ИР-ИР ТӐРСА, ҪАҪ-ҪАҪ ЛАРТӐМ




1. Ир-ир тӑрса, каҫ-каҫ лартӑм,
   Хӗрлӗ ҫипрен камсулсем эп ҫыхрӑм. *(2 хут)*
2. Камсул пилӗкӗме пӗрчӗ,
   Тусҫӑм мана вӑрттӑн та куҫ хӗсрӗ. *(2 хут)*
3. Сирӗн чӳречӗр пӑрӑмсӑр —
   Сулӑ хурса, сулӑ та тӳсмерӗ. *(2 хут)*
4. Тусҫӑм, тусу сан сисӗмсӗр —
   Урисенчен тапсан та сисмерӗ. *(2 хут)*
5. Сӑрт-ту ҫинче ҫаран пулсан,
   Утҫӑма эп тӑлласа ярӑттӑм. *(2 хут)*
6. Савнӑ каччӑм хама пулсан,
   Шур перчетке ҫыхса та парӑттӑм. *(2 хут)*
7. Шур перчетке — вӑрӑм кунча,
   Кам хулпуҫҫийӗ ҫине хурам-ши? *(2 хут)*
8. Манӑн савни халь ҫук кунта,
   Кам куҫӗнчен пӑхса та юрлам-ши? *(2 хут)*
9. Ывӑннӑран пӗр ларӑттӑм —
   Ларса канма майлӑ та вырӑн ҫук. *(2 хут)*
10. Ăш ҫуннӑран калаҫӑттӑм —
    Хампа пӗр канашлӑ та ҫыннӑм ҫук. *(2 хут)*
11. Сад алӑкӗ уҫӑ выртать —
    Кӗретӗр-тухатӑр та хупмастӑр. *(2 хут)*
12. «Саватпӑр, саватпӑр»,— тетӗр,
    Иртетӗр-ҫӳретӗр те кӗместӗр. *(2 хут)*

# 2. СУЙЛӐР, СУЙЛӐР ХĔРСЕНЕ




1. Чĕкеç чĕвлетни... *(2 хут)*
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕвлетни, чĕвлетни —
Çамрӑк хĕрĕн калаçни, калаçни.

2. Шӑнкӑр, шӑнкӑрти... *(2 хут)*
Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юххи, шыв юххи —
Хĕрупраçĕ ташлани, ташлани.

3. Шурӑ хур аçи... *(2 хут)*
Шурӑ-шурӑ хур аçи, хур аçи
Кӳлĕре-çке вӑл ларать, вӑл ларать.

4. Харсӑр сар ачи... *(2 хут)*
Харсӑр, харсӑр сар ачи, сар ачи
Хӑй пек ӑслӑ хĕр шырать, хĕр шырать.

5. Татӑр мӑйӑрне... *(2 хут)*
Татӑр, татӑр мӑйӑрне, мӑйӑрне —
Сар çу евĕр саррине, саррине.

6. Суйлӑр хĕрсене... *(2 хут)*
Суйлӑр, суйлӑр хĕрсене, хĕрсене —
Пур енчен те маттурне, маттурне.

## 3. ПĔЛĔТЛĔ МАР, УЯР МАР




1. Пĕлĕтлĕ мар, уяр мар *⁾—
Кĕçĕр çăвас çумăр мар.
Ни хура мар, сарă мар —
Эпир каяс ача мар.

2. Акăш вĕçет киклатса,
Шур хурсене хăратса.
Қунта килет сар ача,
Сар хĕрсене тустарса.

3. Ан вĕç, ан вĕç, акăшĕ,
Шур хурсене хăратса.
Ан кил, ан кил, сар ача,
Сар хĕрсене тустарса.

## 4. И, ҚУКРИ-МАҚРИ—ШЫВ ҚУКРИ




1. Сар чечеклĕ шур курка,— *(2 хут)*
И, кукри-макри — шыв кукри,—

2. Пирĕн алра вылянать. *(2 хут)*
И, кукри-макри — шыв кукри.

3. Çинçе пӳллĕ сар ача,— *(2 хут)*
И, кукри-макри — шыв кукри,—

4. Пирĕн умра явăнать. *(2 хут)*
И, кукри-макри — шыв кукри.

---

* Қашни йĕркине икĕ хут юрлаççĕ.

## 5. АН ТУХ, ШАПА




1. Ан тух, шапа, *(2 хут)*
Ан тух, шапа, шыв хěрне,
Тăрă шыва пăтратса.

2. Ан лар, тусçăм, *(2 хут)*
Ан лар, тусçăм, çын çумне,
Ман чěрене хускатса.

3. Шурта шапа, *(2 хут)*
Шурта шапа кăшкăрать —
Шыв типессе вăл пěлмест.

4. Савни ют хěр, *(2 хут)*
Савни ют хěрпе вылять —
Тусě писессе сисмест.

5. Урлă пирě, *(2 хут)*
Урлă пирě — çул урлă,
Тăрăх пирě — уй урлă.

6. Эпир савни, *(2 хут)*
Эпир савни — çурт урлă,
Қаяс ачи — ял урлă.

7. Шурта шуркут, *(2 хут)*
Шурта шуркут йăви пур —
Чěкеçěнне çитеймест.

8. Ялта маттур, *(2 хут)*
Ялта маттур ача пур —
Ман савнине çитеймест.

9. Хурсем ăçта, *(2 хут)*
Хурсем ăçта çӳреççě?
— Аслă çаран варринче.

10. Хěрсем ăçта, *(2 хут)*
Хěрсем ăçта юрлаççě?
— Уяв-вăйă картинче.

11. Қăвак чечек, *(2 хут)*
Қăвак чечек, шур чечек —
Сухаламан çěр çинче.

12. Ула пилěк, *(2 хут)*
Ула пилěк пěремěк —
Қаччăн савнă хěрěнче.

13. Шурă чăлха, *(2 хут)*
Шурă чăлха пурринче
Тăхăнмăп-ха хурине.

14. Хамăн савни, *(2 хут)*
Хамăн савни пурринче
Қаймăп-ха çын савнине.

## 6. ĶУКĂР-МАĶĂР ĶАÇМАРАН




1. Ķукăр-макăр каçмаран *(2 хут)*
Пĕр каçмалла мар иккен [1].

2. Пĕр каç вăййа тухмасан,
Çĕр каçмалла мар иккен.

3. Ула пилĕк качакин
Ķапан туртас йăли пур.

4. Анаткасăн хĕрĕсен
Йăлăнтарас йăли пур.

5. Чĕрес-чĕрес сарă çу,
Ларт хĕвеле — ирĕлтĕр.

6. Ирĕлтĕр те ан пĕттĕр.
Урçа пире ан кĕттĕр.

7. Ķăркка анкартне кĕрсен,
Унăн ури хуçăлать.

8. Хĕрсем уява тухсан,
Çĕн çын тути усăнать.

---
[1] Ķашни йĕркине икĕ хут юрлаççĕ.

# 7. ПĔЧĔК КĔПЕР—КĔПЕР ТЕ МАР




1. Пĕчĕк кĕпер — кĕпер те мар,— *(2 хут)*
И-и, кĕпер те мар [1],— *(2 хут)*

2. Пĕр лаша та каçаймасан,
И-и, каçаймасан.

3. Савса тунă тус — тус та мар,
И-и, тус — тус та мар,—

4. Куçран куçа, ай, пăхмасан,
И-и, ай, пăхмасан.

5. Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçекен те,
И-и, вĕçекен те,—

6. В(ĕ)рене çулçи, ай, мар-ши вăл?
И-и, ай, мар-ши вăл?

7. Тăсса купăс калакан та,
И-и, калакан та,—

8. Манăн савни, ай, мар-ши вăл?
И-и, ай, мар-ши вăл?

9. Савни, савни, эс мар-и те?
И-и, эс мар-и те?

10. Аттун кĕлли йĕс мар-и те?
И-и, йĕс мар-и те?

11. Пăрахакан эс мар-и те?
И-и, эс мар-и те?

12. Йăлăнакан эс мар-и те?
И-и, эс мар-и те?

[1] Кашни йĕркине икĕ хут юрлаççĕ.

## 8. ШĂПЧĂҪ МАР, ЧĔҪЕҪ МАР




1. Шăпчăк мар, чĕкеç мар — *(2 хут)*
   Савăнтармăш кайăк мар[1]. *(2 хут)*

2. Аслă мар, ĕçчен мар —
   Пире кирлĕ каччă мар.

3. Симĕс мар, кăвак мар —
   Ҫилĕшӳллĕ тутăр мар.

4. Сăнлă мар, япшар мар —
   Ҫаччă савмалли хĕр мар.

[1] Ҫашни йĕркине икĕ хут юрлаççĕ.

# 9. ТĔПĔР-ТĔПĔР УТ ҪИЛЕТ




1. Тĕпĕр-тĕпĕр ут килет, *(2 хут)*
   И-и, ут килет,—
   Тухса пӑхӑр: кам килет? } *2 хут*

2. Ҫутӑ атӑ, шур кĕпе, *(2 хут)*
   И-и, шур кĕпе,—
   Манӑн савнӑ тус килет. } *2 хут*

3. Анлӑ шурӑ Атӑлта, *(2 хут)*
   И-и, Атӑлта
   Чĕп ҫӑларнӑ акӑш пур. } *2 хут*

4. Эпир тухнӑ вӑйӑра, *(2 хут)*
   И-и, вӑйӑра,
   Ӑш ҫунтармӑш каччӑ пур. } *2 хут*

5. Пусси тарӑн — шывĕ ҫук, *(2 хут)*
   И-и, шывĕ ҫук
   Пурҫӑн тутӑр чӳхеме. } *2 хут*

6. Ялĕ пысӑк — каччи ҫук, *(2 хут)*
   И-и, каччи ҫук,
   Савайса, савни, теме. } *2 хут*

7. Лӑппи-лаппи хур ури, *(2 хут)*
   И-и, хур ури
   Урлӑ-пирлĕ пускалать. } *2 хут*

8. Йӑвашкелĕн пĕр каччи, *(2 хут)*
   И-и, пĕр каччи
   Арӑм-хĕре юрататъ. } *2 хут*

## 10. ҪИЛ, ҪӖРҪУРИ




Ҫил, Ҫӗрҫури, пирӗнпеле выляма. *(2 хут)*
Ҫăвак шăрҫа пуҫтармалла выльăпăр,
Симӗссипе сиктермелле выльăпăр,
Хӗрлипелен хӗреличчен выльăпăр,
Хурипелен хураличчен выльăпăр.

# 11. ШĂПЧĂК ЧĔППИ МАР ЭПИР




1. Шăппăн-шăппăн, ай, лармашкăн *(2 хут)*
   Шăпчăк чĕппи мар эпир[1]. *(2 хут)*
2. Мĕскĕн-мĕскĕн тăмашкăн
   Çынран катăк мар эпир.
3. Атьăр пурте, вăййа кĕрсе,
   Ян! янраттарар юрра.
4. Ютран килнĕ çамрăксене
   Хутшăнтарар çак вăййа.
5. Ыраш шăркана ларсассăн,
   Çара алпа ан тытăр.
6. Юткас хĕрĕсем килсессĕн,
   Сивĕ куçпа ан пăхăр.
7. Вăрманалла тек пăхатăр,
   Вăрман симĕсленет-ши?
8. Леш касалла тек пăхатăр,
   Савнă тусăр килет-ши?
9. Мăшăр чей курки чанклатрĕ —
   «Çĕм(ĕ)рĕлчĕ пуль ку»,— терĕм.
10. Мана савни сиввĕн пăхрĕ —
    «Сивĕнчĕ пуль ку»,— терĕм.
11. Чейникĕ пур — аврĕ çук,
    Çавă алла пĕçертет.
12. Савни пур та — шанчăкĕ çук,
    Çавă ăша çунтарать.

---

[1] Кашни йĕркине икĕ хут юрлаççĕ.

## 12. ТУЙ ХАЛĂХĔН ЮРРИ




1. Сада кĕрсе, сад улми çимесессĕн,
Ăçтан чухлас сада та кĕнине?
2. Туя килсе, туй юрри илтмесессĕн,
Ăçтан пĕлес туя та килнине?
3. Шĕшкĕлĕхе пырса та эпĕ кĕтĕм
Сар çу пекех сар майăр пуçтарма.
4. Йыхрав илсе кунта та эпĕ килтĕм
Çак шăллăмăн туйĕнче савăнма.
5. Атьăрах та вăрмана, атьăр каяр
Юманĕнчен хуппине шăйăрма.
6. Атьăрах та, атьăр та хăта патне
Амăшĕнчен хĕрне те уйăрма.

* * *

7. Вир пăттинчен тутлă та пăтă та çук,
Туй юрринчен çăмăл та юрă çук.
8. Мĕншĕн юрламастăр та кĕрлеместĕр,
Элле сирĕн пуçăрсем хĕрмен-и?
9. Юрламасăр, кĕрлемесĕр тăрас мар,
Туйăн илемне сая ярас мар.
10. Пĕр çыхатăр тутрăра, пĕр салтатăр,
Элле çӳçи ун пĕтмест тетĕр-им?
11. Пĕр саватăр, тăвансем, пĕр савмастăр,
Элле чунăм хурланмасть тетĕр-и?
12. Саватăр-и пире те, савмастăр-и?
Савмасассăн каялла каятпăр.
13. Паратăр-и хĕрĕре, памастăр-и?
Памасассăн урăх та тупатпăр.

14. Уçатăр-и хапхăра, уçмастăр-и?
Уçмасассăн, кĕместпĕр — каятпăр.

* * *

15. Туя кăна туй пек те, ай, тăвар-и,
Туй илемĕсене те кӳрер-и?

16. Туй курмашкăн килнĕ те ачасене
Атьăр туй кăтартса та ярар-и?

17. Çĕмĕрт кăна туя та, çĕмĕрт туя,
Атьăр çĕмĕрттерер-и çак туя?

18. Çакă кăна туя та, çакă туя,
Атьăр çĕклентерер-и çак туя?

19. Юхать кăна пĕлĕт те, юхать пĕлĕт,
Юхнă пĕри ăçта та каять-ши?

20. Иртет кăна ĕмĕр те, иртет ĕмĕр,
Иртнĕ ĕмĕр ăçта та юлать-ши?

21. Чĕрик! кăна, чĕрик! те темесессĕн,
Кĕлте ураписем те хускалмĕç.

22. Атьăр кăна, атьăр! та темесессĕн,
Çак туй халăхĕсем те тапранмĕç.

* * *

23. Кăрнатир пек шăллăмăр — Микулай пур,
Пукане пек кинĕмĕр — Анук пур.

24. Шăллăмăр кине хушать ывăл тума,
Кинĕмĕр ĕмĕтленет хĕр курма.

25. Юрт, юрт кăна, утçăм та, ай, юрт, утçăм,
Сана урăх туя та кӳлес çук.

26. Йĕр, йĕр кăна, Анук та, ай, йĕр, Анук,
Сана урăх йĕме те лартас çук.

* * *

27. Тăварас пуль кӳлнĕ те, ай, утçăма —
Тарĕ ытла юха та пуçларĕ.

28. Ирттерес пуль манăн та хĕр ĕмĕрне —
Тăшман ытла çие те пуçларĕ.

29. Тиллит кăна тиллит те тилĕ ури,
Авă чупса иртрĕ те — куртăр-и?

30. Ырăях та кинĕмĕр, ай, Анук пур,
Акă иртсе кайрĕ ун хĕр ĕмри.

# 13. ХĔРÇУМСЕН ЮРРИ




1. Уçса ярайăр хăтанăн, ай, хапхине,
Юрласа ярăр ыр çын юррине.

2. Уçса ячĕç хăтанăн, ай, хапхине,
Юрласа ячĕç ыр çын юррине.

3. Каю çине утçăма эпĕ ятăм —
Темĕн чухлĕ каюсем çиес пек.

4. Атте-анне çемйинче эп хĕр пултăм —
Ĕмĕр вĕсемпе пĕрле пулас пек.

5. Укăлчанăн хăми те пилĕк хăма,
Шăлтăр кайрĕ кăçалхи уярпа.

6. Манăнах та çӳçĕм те сарă, кăтра,
Тăсăлайрĕ кăçалхи шухăшпа.

7. Хура вăрман витĕр те, ай, тухнă чух
Нумай татрăм хура та çĕмĕрте.

8. Атте-аннеренех те уйрăлнă чух
Нумай тăкрăм вĕри те куççуле.

9. Аватать-ши куккукĕ, аватмасть-ши
Сĕм вăрманта пĕчченçи ларнă чух?

10. Асăнаç-ши аттепе анне мана
Хăйсем иккĕн кăна та юлнă чух?

11. Авкаланчăк кăна та утçăм пурччĕ —
Ĕшентертĕм вăхăтсăр чуптарса.

12. Панулминчен хĕрлĕрех сăнăм пурччĕ —
Шуратайрăм вăхăтсăр хуйхăрса.

# 14. УКĂЛЧАНА СӲТРĔМ ТЕ УЯ ТУХРАМ




1. Укăлчана сӳтрĕм те уя тухрăм
Ыраш калчисене те пăхмашкăн. *(2 хут)*

2. Инçе çула тухса та эпĕ килтĕм
Савнă тăвансене те курмашкăн. *(2 хут)*

3. Эпĕ ку енче, тăванçăм, эс леш енче —
Иксĕмĕр хушăмăрта юхăм шыв. *(2 хут)*

4. Қаçăттăмччĕ — ураçăм, ай, йĕпенет,
Қаçмасассăн — тăванçăм сивĕнет. *(2 хут)*

5. Сивĕнмĕпĕр, тăванçăм, уйрăлмăпăр —
Ĕмĕрлĕхе пĕрле те пурнăпăр. *(2 хут)*

# 15. ЭПИР — АТТЕ-АННЕНĔН ÇУНАЧĔ




1. Кăвак кăвакарчăн та хам пулам-и,
Карлăк çине ларса та канам-и?

*Хушса юрламалли:*

Сарă-сарă кайăкĕ, хура-хура чĕкеçĕ, } *2 хут*
Эпир — атте-анненĕн çуначĕ.

2. Сирĕн савнă тăванăр хам пулам-и,
Умăрçăра тăрса та юрлам-и?

*Хушса юрламалли.*

3. Ĕшне кăна ĕшне те, ай, сĕм вăрман,
Тухаймарăм эпĕ те çул çукран.

*Хушса юрламалли.*

4. Пурăнмалли кунсем те, ай, пĕтмесен,
Уйрăлаймăп, тăвансем, эп сиртен.

*Хушса юрламалли.*

5. Костюм тăхăнмасан та мĕн тăхăнас,
Савнă тумтирĕм çавă та пулсан?

*Хушса юрламалли.*

6. Сирĕн пата килмесен, ăçта каяс,
Юратнă тăвансем эсир пулсан?

*Хушса юрламалли.*



23002-чув.
Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

## 16. ЛĂПКĂ ПУЛĂР, ХУЛЛЕН ÇӲРĔР




1. Утса пырать, чупса пырать
Кăвакарчăн пек, ай, лаша.

*Хушса юрламалли:*

Лăпкă пулăр, хуллен çӳрĕр.
Авăтать, ав, чăпар куккук вăрманта.

2. Куç хупмасăр кĕтсе тăрать —
Тăвансемĕр пире савать.

*Хушса юрламалли.*

3. Çырли пиçет, çырли пиçет,
Пиçни тăсăлайса ӳкет.

*Хушса юрламалли.*

4. Ку черккене ĕçсе ярсан,
Хам та тăсăлайса ӳкеп.

*Хушса юрламалли.*

5. Шурă иккен, шурă иккен,
Шурта мунча та пур иккен.

*Хушса юрламалли.*

6. Çак тăванăм патне килсен,
Хăна пулмалăх пур иккен.

*Хушса юрламалли.*

## 17. ВĂРМАН УРЛĂ УЙĂХ ҪАҪРĔ




1. Вăрман урлă уйăх каçрĕ,
Вăрман хупласа илчĕ.
Вăрман хупласа илчĕ те,
Тĕттĕм пулса та тăчĕ. } 2 хут

2. Çамрăк пĕвĕм ӳссе çитрĕ —
Самани йывăр пулчĕ.
Самаййĕ лайăхланчĕ —
Ĕмĕр кĕскелсе юлчĕ. } 2 хут

3. Утрăм, утрăм вăрманалла,
Кĕтĕм кайрăм чăтлăха.
Чăтлăх вăрман тискер те мар —
Лăпсăр-лăпсăр çулçисем. } 2 хут

4. Унта кайăксем юрлаççĕ,
Элле шăпчăк ларнă-ши?
Кунта çынсем пит юрлаççĕ,
Элле ман тăван пур-ши? } 2 хут

# 18. ÇӲРЕН УТÇĂМ ХАЛЬ ТЕ ÇӲРЕТ




1. Хайхи çӳрен утçăм та халь те çӳрет,
   Чĕнтĕрленĕ кутлăхне чĕтрентерсе. *(2 хут)*

2. Хальхи авалхи тусçăм халь те çӳрет,
   Пĕр лăпланнă чĕреме те хускатса. *(2 хут)*

3. Сирĕн умăрпалан та иртнĕ чухне
   Эс лараттăн, тăванăм, кусуй çинче. *(2 хут)*

4. Эс чĕнмерĕн мана та — эп чĕнмерĕм:
   Çилленсе мар, тăванçăм,— вăтаннипе.
   *(2 хут)*

## 19. АНКАРТИСЕН ХЫÇĔНЧЕ, ЛУПАШКАРА




1. Анкартисен хыçĕнче, лупашкара
Шăнкăртатса юхать те, ай, юр шывĕ. *(2 хут)*
2. Нумаях та тăраймĕ — типсе ларĕ.
Çуса юлар-ха тарай та тутрине. *(2 хут)*
3. Нумаях та тăмастпăр, час каятпăр —
Курса юлăр куçăрсем тăраниччен. *(2 хут)*
4. Çӳллĕ тусем çинче те çӳллĕ кĕлет —
Уçса хупас терĕм-ха, ай, çилсĕр кун. *(2 хут)*
5. Ах, тăванçăм, тетĕп те, ай-хай, тăван,
Килсе курас терĕм çав, ай, ĕççĕр кун. *(2 хут)*

## 20. АВĂТАТЬ-ШИ КУККУК, АВĂТМАСТЬ-ШИ?




1. Авăтать-ши куккук, авăтмасть-ши
Сĕм вăрманта ларнă вăхăтра? *(2 хут)*
2. Асăнать-ши тăван, асăнмасть-ши
Хăй пĕчченçи юлнă вăхăтра? *(2 хут)*
3. Чĕмпĕртен те илтĕм чĕчĕ тихи.
«Ут пулаймĕ»,— тесе ан калăр. *(2 хут)*
4. Çамрăклах та эпĕ арсăр юлтăм.
«Шухă пуль ку»,— тесе ан шутлăр. *(2 хут)*

# 21. УЛӐХРА ХӐМЛА ҪӐНА




1. Ҫӳл ту ҫинче ӳсет те виҫӗ хурӑн,
Ҫассан укӑлчана та ҫитмелле.

*Хушса юрламалли:*

Улӑхра хӑмла ҫӑна,
Эпир кунта хӑнара.
Нумай тӑмӑпӑр,
Часах кайӑпӑр.
} 2 хут

2. Ҫӗҫӗр ан кай, тӑванӑм, ыран кайӑн,
Вырӑн эсӗ выртсан та ҫитмелле.

*Хушса юрламалли.*

3. Ҫӳл ту ҫинче шӑтнӑ та пӗр чие ҫеҫ,
Хӑҫан вӑл пулӗ-ши те ҫӗр чие?

*Хушса юрламалли.*

4. Эпир, тӑван, тӗл пултӑмӑр халь тин ҫеҫ,
Тата хӑҫан пулӑпӑр пӗр ҫӗре?

*Хушса юрламалли.*

# 22. «УТҪĂМ ЛАЙĂХ», ТЕСЕ ЭС АН МУХТАН




1. «Утҫăм лайăх», тесе те эс ан мухтан —
Уту тăра юлĕ те, ай, ҫул ҫине. *(2 хут)*

2. «Хам ҫеҫ лайăх», тесе те эс ан мухтан —
Начар яту юлĕ те, ай, ял ҫине. *(2 хут)*

3. Шурă тутăр шуррипе эс ан мухтан —
Унăн хураласси те, ай, час пулĕ. *(2 хут)*

4. Ху ҫеҫ лайăх пулнипе пит ан мухтан —
Начара юласси вăл, ай, час пулĕ. *(2 хут)*

5. Ҫурницана хутсан та иртерех хут —
Ҫăвак тĕтĕм хăпартăр-и те ҫӳле. *(2 хут)*

6. Ăҫта ҫӳресессĕн те лайăх ҫӳре —
Лайăх яту кайтăр та, ай, ял ҫине. *(2 хут)*

# 23. ÇӐЛЛĔ ТУСЕМ ÇИНЧЕ ПĔР ÇЫН ÇӐРЕТ




1. Çӳллĕ тусем çинче те пĕр çын çӳрет,
   Антарар-и мерченсем суйлама? *(2 хут)*

2. Мерченсем суйлассисем суя пулччăр,
   Эпир ыр курассисем чăн пулччăр. *(2 хут)*

3. Пăлансем пăрушĕсене çуратнă
   Çӳллĕ тусем çинче те выляма. *(2 хут)*

4. Пире атте-аннесем, ай, çуратнă
   Ялан ырă çынсемпе паллашма. *(2 хут)*

5. Пĕчĕккĕ çеç лаша та турă лаша
   Чăмăртанса юртса та çул илет. *(2 хут)*

6. Айванах та пуçăм, çамрăк чунăм
   Пурăна-пурăна та ăс илет. *(2 хут)*

# 24. ЧУПСА-ЮРТСА КИЛЕТ ТУР ÇĂРХА




1. Хура сăрлă çатан та урапа
Шăлтăртатать туртса пынă чух.
Чупса-юртса килет тур çăрха.

*Хушса юрламалли:*

Чупса-юртса килет те тур çăрха,
Кĕмĕл пĕкки килет çуталса,
Чĕн тилхепи пырать туртăнса. } *2 хут*

2. Атте-анне çурчĕ, ай, аслă çурт —
Чун хурланать тухса кайнă чух.
Чупса-юртса килет тур çăрха.

*Хушса юрламалли.*

3. Вуник чĕкеç пĕрле — ай, пĕр кашта,
Юрласа юррисем пĕтес çук.
Чупса-юртса килет тур çăрха.

*Хушса юрламалли.*

4. Çак тăвансем пурте пĕрле чухне
Қалаçса сăмахсем пĕтес çук.
Чупса-юртса килет тур çăрха.

*Хушса юрламалли.*

## 25. ЧУПКАЛА-ЧУПКАЛА ТА ÇЫРЛА ПУХАП




1. Утса-чупкаласа та çырла пухап,
   Тулайĕ-ши шурă та, халĕ, калпакне? *(2 хут)*

2. Шухăшла-шухăшла та эпĕ юрлап,
   Килейĕ-ши тăвансен, халĕ, кăмăлне? *(2 хут)*

3. Анатра та утсене шăвараççĕ,
   Çинçе сассисемпелен, халĕ, шăхăрса. *(2 хут)*

4. Сассисемех акăшсен сассисем пек,
   Пĕвĕ-сийĕсем — Атăл, халĕ, хăмăш пек. *(2 хут)*

# 26. ÇӲÇĔМЕХ ТЕ САРĂ ПУЛАИНЧЧĔ




1. Çӳçĕмех те сарă пулаинччĕ,
Йĕри-тавра кăтраях та пулинччĕ.

*Хушса юрламалли:*

Шăнкăр-шăнкăр-шăнкăр,
Шăнкăр шыв юхать.
Ак çакăнта ĕçсе-çини
Асăнма юлать.

2. Чĕлхе-çăвар çемçе те пулинччĕ —
Пур тăвансене пурне те юринччĕ.

*Хушса юрламалли.*

3. Ишет кăна пăлан, ишет пăлан,
Майракине шывранах та илмесĕр.

*Хушса юрламалли.*

4. Пире кĕтет тăван, кĕтет тăван,
Чӳречерен куçнеех те илмесĕр.

*Хушса юрламалли.*

5. Çӳллĕ ту çинче çĕлен шăхăрать,
Шăхăрсан та питĕ сайра
шăхăрать.

*Хушса юрламалли.*

6. Сирĕн пекех маттур, ман пек
чипер
Çуралсан та питĕ сайра
çуралать.

*Хушса юрламалли.*

## 27. АХ, АХ КĂНА ТЕТĔП ТЕ




1. Ах, ах кăна, тетĕп те, ах, ах, тетĕп,
   Тăвансене курасшăн çунатăп. *(2 хут)*
2. Кураччен пĕр курасшăн эп çунатăп,
   Курсан, нимĕн калаçма пĕлместĕп. *(2 хут)*
3. Шăнкăр кăна шăнкăр та, ай, шыв юхать,
   Шăнкăрч чĕппийĕ те, ай, шыв ĕçет. *(2 хут)*
4. Шăнкăрч чĕппийĕ шыв та, ай, ĕçнĕ чух
   Шыври шашкăн унта, ай, мĕн ĕç пур? *(2 хут)*
5. Тăванпалан тăван та ĕçсе çиет —
   Çичĕ ютăн унта та мĕн ĕç пур? *(2 хут)*

## 28. УТÇĂМ ПЫМАСТЬ ТАРĂН ÇЫРМАНА




1. Утçăм пымасть тарăн та, ай, çырмана,
   Ĕмĕр иккĕ килмест те çак тĕнчене. *(2 хут)*
2. Ĕмĕр иккĕ килсен те çак тĕнчене,
   Вилмĕччĕçĕ ырă та, ай, этемсем. *(2 хут)*
3. Инçе иккен ырашăн, ай, анисем,
   Ялан сăрт хĕррипе те, ай, утмалла. *(2 хут)*
4. Инçе иккен пирĕн те, ай, тăвансем,
   Ялан ĕç пăрахса та, ай, каймалла. *(2 хут)*

## 29. АСЛĂ ÇУЛ ХĔРРИСЕМ МАЯКЛĂХ




1. Аслă çул хĕррисем те, ай, маяклăх,
Маяклăхра хура та,
Маяклăхра хура та чĕкеçлĕх.

2. Чĕкеçĕсем лараççĕ, ай, вĕçес пек,
Эпирех тăратпăр та,
Эпирех тăратпăр та каяс пек.

3. Чĕкеçĕсем килеççĕ, ай, юр кайсан,
Эпирех килес çук та,
Эпирех килес çук та пĕр кайсан.

## 30. ВУНИККĔЛЛЕ ЯВНĂ ЧĔН НУХАЙККА




1. Вуниккĕлле явнă та чĕн нухайкка,
Мĕншĕн сӳтĕлмелле те, ай, явнă-ши? *(2 хут)*

2. Уйрăмах та çуралса, пĕрле ӳссе,
Мĕншĕн уйрăлмалла та, ай, тунă-ши? *(2 хут)*

3. Уйрăлмăпăр, тăванçăм, сивĕнмĕпĕр,
Ĕмĕрлĕхе пĕрле те, ай, пурнăпăр. *(2 хут)*

## 31. ИРХИНЕ ТĂТĂМ, ВĂРМАНА ҪАЙРĂМ




1. Ирхине те тăтăм, вăрмана кайрăм
Шакăр сарă мăйăр суйлама. *(2 хут)*

2. Шакăр сарă мăйăр суйла-суйла,
Тăра юлтăм хĕвел анаҫне. *(2 хут)*

3. Ирхине те тăтăм — пит ир пулчĕ —
Пирвайхи автанăн вăхăчĕ. *(2 хут)*

4. Анне пире пачĕ кăкăр сĕчĕ —
Аннен ăшă ыйхă вăхăчĕ. *(2 хут)*

5. Ирхине те тăтăм, вăрмана кайрăм,
Хура ҫĕмĕрт татрăм хут ҫине. *(2 хут)*

6. Атте-аннеренех уйрăлсассăн,
Нумай шухăш килчĕ пуҫ ҫине. *(2 хут)*

## 32. ЙĂРАН КĂНА ЙĂРАН ЕШĔЛ СУХАН




1. Йăран кăна йăран та ешĕл сухан.
Ун ешĕлне ан пăх та,
Ун ешĕлне ан пăх та — татса çи.

2. Эрнесенĕн хушши те, ай, çичĕ кун.
Çичĕ кунне ан пăх та,
Çичĕ кунне ан пăх та — килсе кур.

## 33. ПИЧĔКИСЕМ ТУЛАТЬ ТЕ...




1. Пичĕкисем тулать те, к(ĕ)реки юхать,
Сарă курки çӳрет те çиелте. *(2 хут)*

2. Сарă-сарă куркин те çаврăнăçпе
Çаврăнайса килтĕм те эп кунта. *(2 хут)*

3. Эп килнишĕн, тăвансем, ан ӳкĕнĕр,
Хăвăр çапла пырăр та асăнса. *(2 хут)*

# 34. ĂСАТАТĂР ПУЛСАН — ХАЛЬ ĂСАТĂР




1. Килтĕмĕр те, тăвансем, халь каятпăр —
Кураймарăмăр куçсем т(ă)раниччен. *(2 хут)*

2. Ăсататăр пулсан та, халь ăсатăр,
Халь ăсатмасассăн çав — каймастпăр. *(2 хут)*

3. Сăмаварĕ çутă та, чейĕ хура —
Каяс килмест сăмавар умĕнчен. *(2 хут)*

4. Тăванĕсем лайăх та, чĕлхи çемçе —
Каяс килмест тăвансем патĕнчен. *(2 хут)*

5. Эпирех те килтĕмĕр сире савса,
Эсир те пырăр пире асăнса. *(2 хут)*

6. Ăсататăр пулсан та, халь ăсатăр,
Пусмăр çине шăлса та тасатăр. *(2 хут)*

7. Ăсататăр пулсан та, атьăр утăр,
Хир хапхинчен тухиччен ăсатăр. *(2 хут)*

8. Хир хапхинчен леререх, ай, кайсассăн,
Шурă тутăрпа сулласа юлăр. *(2 хут)*

# 35. СИЛЛЕНСЕМЕХ, ҪĔПЕР




1. Силленсемех, кĕпер те, силлен, кĕпер,
Таканлană утсем те, ай, каҫиччен. *(2 хут)*

2. Савăнсамах, тăван та, савăн, тăван,
Эпир хăна пулса та, ай, кайиччен. *(2 хут)*

3. Шурăмпуҫпе ҫунă та, ай, шурă юр —
Тилĕ хăваламашкăн, ай, кăпăш юр. *(2 хут)*

4. Сирĕн кăмăлăрсем те, ай, мĕнле пуль —
Манăн пĕрле пурăнма, ай, шухăш пур. *(2 хут)*

5. Ылтăнпала кĕмĕл те мĕншĕн хаклă?
Мăскал ҫине хурса та, ай, виҫнĕрен. *(2 хут)*

6. Пирĕн ҫак тăвансем те мĕншĕн хаклă?
Мĕн пĕчĕкрен пĕрле те, ай, ӳснĕрен. *(2 хут)*

7. Улача та кĕпе те кĕмĕл тӳме
Мунча кĕнĕ чухне те, ай, ҫухалчĕ. *(2 хут)*

8. Улача та кĕпе те тата пулĕ —
Кĕмĕл тӳми урăх та, ай, пулас ҫук. *(2 хут)*

9. Сире пирĕн пекки те тата пулĕ,
Пире сирĕн пекки те, ай, пулас ҫук. *(2 хут)*

## 36. ТĂВАНСЕМ ТĂВАЙККИПЕ УТ ÇУЛАÇÇЕ




1. Т(ă)вансем тăвайккипе те ут çулаççĕ,
Çавин тăпси епле те тӳсет-ши? *(2 хут)*

2. Эпирех килетпĕр те, х(ă)вăр пымастăр —
Сирĕн чĕрĕрсем епле тӳсеç-ши? *(2 хут)*

3. Пĕчĕккĕ чух эпĕ те пĕчĕккĕччĕ —
Шăл хушшинчи мăйăрăн тĕшшиччĕ. *(2 хут)*

4. Пĕчĕккĕрен пысăк та эпĕ пултăм,
Араскалăм пуртан та çын пултăм. *(2 хут)*

5. Юри килтĕм эпĕ те юр юрлама,
Ӳлĕмĕнчен килĕп-ха калаçма. *(2 хут)*

6. Ӳлĕмĕнчен килесси пул(ĕ)-и, пулм(ĕ)-и?
Юррăн çав(ă)рăнăçĕ те хăй çапла. *(2 хут)*

## 37. МĔН КАЛАÇАР, ТĂВАНСЕМ?




1. Мĕн калаçар, т(ă)вансем, мĕн пуплешер?
Йӳçĕ ĕçсе, тутлă та, ай, калаçар. *(2 хут)*

2. Йӳçĕ ĕçсе, тутлă, ай, калаççан,
Ҫусем пĕртăвансем те, ай, теччĕр-и? *(2 хут)*

3. Алăкăр умĕнче улма йывăç —
Улмисем пулмасассăн, ай, мĕн илем? *(2 хут)*

4. Хăмла ярса тунă пыллă сăра —
Юрламасăр ĕçсессĕн, ай, мĕн илем? *(2 хут)*

## 38. УТМĂЛ ХĂЛАÇ ВĂРМАН ЭП ҪАСТАРТĂМ




1. Утмăл хăлаç вăрман эп кастартăм —
Улма йывăç пуррине пĕлмерĕм. *(2 хут)*
2. Сĕтел умне тăрса эп юрларăм —
Ватă çынсем пуррине пĕлмерĕм. *(2 хут)*
3. Хура вăрман касрăм — эп çул хыврăм,
Самар шывĕсене те курасшăн. *(2 хут)*
4. Инçеех те çула çывăх турăм,
Хамăр тăвансене те курасшăн. *(2 хут)*

# 39. ВУНИКĔ ПУС — ПĔР УКÇА




1. Вуникĕ пус — пĕр укçа, *(2 хут)*
   Сумасăрах илмĕпĕр [1]. *(2 хут)*

2. Ай-хай, чунăм килйышĕ,
   Ыйтмасăрах кĕмĕпĕр.

3. Çерçи «чим-чим», теет-çке,
   Хуçи «кил, кил», теет-çке.

4. Хуçи «кил, кил», тесессĕн —
   Эпир сĕтел умĕнче.

5. Хуçи «кил, кил», темесен —
   Эпир алăк патĕнче.

---

[1] Кашни йĕркине икĕ хут юрлаççĕ.

## 40. АНМĂТТĂМ ЭП ЮХАНШЫВ ХЁРНЕ




1. Анмăттăм эп юхан та шывăн хёрне —
Шыв сулхăнĕпе ўснĕ те хăмла пур. *(2 хут)*

2. Килмĕттĕмччĕ, тăванăм, эп çак киле —
Хампа пĕр вартан та тухнă тăван пур. *(2 хут)*

3. Аслă улăх тăрăх та пит çўрес мар —
Ўхлĕм тĕпĕсене те, ай, хăртас мар. *(2 хут)*

4. Питех çўлтен-çўлтен те калаçас мар —
Атте-анне ятне те, ай, çĕртес мар. *(2 хут)*

5. Пĕлĕт юхать ĕнтĕ те, пĕлĕт иртет,
Ман пуçăмри çавракa, ай, çĕлĕк пек. *(2 хут)*

6. Ĕмĕр иртет ĕнтĕ те, ĕмĕр иртет,
Каç выртсассăн курнă та, ай, тĕлĕк пек. *(2 хут)*

7. Хура вăрман çийĕнче — хура пĕлĕт,
Юхаймĕ-ши вăрманăн, ай, хыçнелле? *(2 хут)*

8. Эпир пĕчĕк чухне выляни-кулни
Каяймĕ-ши ĕмĕрĕн, ай, тăршшĕпе? *(2 хут)*

## 41. АСЛĂ ÇУЛПА КИЛЕТ АСЛĂ АПУС




1. Аслă çулпа килет те аслă апус.
   Тимĕр кăвак учĕ те — çул пуçĕ.

   *Хушса юрламалли:*

   Ай-хай, хура куççăм, курса юлар-ха
   Саркайăк пек т(ă)вансене. *(2 хут)*

2. Шет йывăр пуль çул пуçĕ, ай, пуласси —
   Çилхи, хӳри вĕçĕсем пасарнă.

   *Хушса юрламалли.*

3. Аттерен-аннерен те уйрăлсассăн,
   Шет йывăр пуль çурт пуçĕ пуласси.

   *Хушса юрламалли.*

4. Шет йывăр пуль çурт пуçĕ, ай, пуласси —
   Икĕ тăнлав çийĕсем шуралнă.

   *Хушса юрламалли.*

5. Тарăн шыва чăмрăм эп, ăшăх тесе,
   Мерчен сапакисем те пур тесе.

   *Хушса юрламалли.*

6. Инçе çула тухрăм эп, çывăх тесе,
   Хампа пĕртăвансем те пур тесе.

   *Хушса юрламалли.*

# 42. ХИТРЕ, ХИТРЕ




1. Хитре, хитре — чăваш кĕпи хитре.
Хитре, хитре — çĕлеме пĕлсен хитре. *(2 хут)*

2. Хитре, хитре — çамрăк ĕмĕр хитре.
Хитре, хитре — ăспа пурăнсан хитре. *(2 хут)*

3. Хитре, хитре — ешĕл çаран хитре.
Хитре, хитре — чечексем пуртан хитре. *(2 хут)*

4. Хитре, хитре — пирĕн пурнăç хитре.
Хитре, хитре — хамăр харсăртан хитре. *(2 хут)*

# 43. ПИРĔН ÇИЕ ТЕЛЕЙСЕМ ÇУНĂ ЧУХНЕ




1. Шурăмпуç шуралса та килнĕ чухне
   Тур урхамах тихасем, халĕ, хăмланă. *(2 хут)*

2. Пирĕн çие телейсем çунă чухне
   Пире атте-аннесем, халĕ, çуратнă. *(2 хут)*

3. Кĕмĕлтен те çĕрĕ те эп хывтартăм
   Çирĕм пилĕк пуслăх та, халĕ, укçаран. *(2 хут)*

4. Шырарăм та тупрăм эп тăванăма
   Панулмисем пиçнĕ те, халĕ, пахчаран. *(2 хут)*

# 44. ҚӐЛТӐР ҚӐНА ҚӐЛТӐР САС ИЛТӖНЕТ




1. Қӑлтӑр кӑна кӑлтӑр та сас илтӗнет —
   Аякра аслатисем авӑтать. *(2 хут)*

2. Ан хуйхӑрсам, пуҫӑм та, ан йӗр, куҫӑм,—
   Пурнӑҫӑмӑр халь ялан ырланать. *(2 хут)*

3. Ҫӳлте иккен ҫӗлӗксен, ай, пӑтисем,
   Вӑл пӑтара ҫӗлӗксем ҫук иккен. *(2 хут)*

4. Инҫе иккен пирӗн те, ай, тӑвансем,
   Курас килнӗ вӑхӑтра ҫук иккен. *(2 хут)*

## 45. САКӐЛ ТУР ЛАША




1. Ыткӑнса-ыткӑнса юртаканни —
Хӑй те ырӑ утӑн тихи вӑл.

*Хушса юрламалли:*

Сакӑл тур лаша, *(2 хут)*
Ёçер-ха юрласа.

2. Шухӑшла-шухӑшла юрлаканни—
Хӑй те ырӑ çыннӑн ачи вӑл.

*Хушса юрламалли.*

3. Утаях та чупми çӳремешкӗн
Элле пирӗн лаша япӑх-и?

*Хушса юрламалли.*

4. Вӑтанса-вӑтанса çӳремешкӗн
Элле пирӗн колхоз начар-и?

*Хушса юрламалли.*

# 46. ПУЛЛИ ТУТЛĂ, ШЫВĔ ТĂРĂ.




1. **Электрицă** лампи çутă çунать
**Курница пек** пӳртĕн те варринче.
**Ман тăванçăм** шăпчăк пекех
юрлать
**Хăй** саван тăванĕсем хушшинче.

*Хушса юрламалли:*

Пулли тутлă, шывĕ тăрă,
Çыранĕсем чăнкă —
Çавă аса килет халь мана.

2. Ĕçем-ши ку пыла, ан ĕçем-ши?
Ĕçсе ярсан ӳсĕр те пулмăп-ши?
Ĕçсе ярсан ӳсĕр те пулмăп-ши,
Çын умĕнче намăса юлмăп-ши?

*Хушса юрламалли.*

3. Улма-чăпар утçăм та пур чухне
Пасара каяссин те мĕнĕ пур?
Çумриех те мăшăр лайăх чухне
Хăнана каяссин те мĕнĕ пур?

*Хушса юрламалли.*

# 47. ВЫЛЬӐР, ЁÇЛЁР, ÇАМРӐКСЕМ




1. Ķаçӗ ӑшӑ, хӗр-туссем,
Тухӑр вӑййа урама.
Ķилӗр, килӗр, каччӑсем,
Мӑшӑрлӑх хӗр суйлама.
2. Пӑхӑр, суйлӑр хӗрсене:
Сӑнӗ-пичӗ чиперне,
Ķӑмӑлпа вӑл ыррине,
Пур ӗçре те харсӑрне.
3. Вӑйӑра чух хӗрсене
Танлаштарӑн чечекпе.
Тӗл пулсассӑн ӗçсенче —
Ķурӑн чӑн-чӑн ӗçчене.
4. Тытӑр алӑран алла —
Пултӑр çаврака карта.
Ян янраттарса юрра
Чаплӑлантарар вӑййа.
5. Юрӑ çиттӗр пур каса,
Ķаçхи шӑплӑха уçса.
Ташша ташлӑр ал çупса —
Савӑнтартӑр вӑл çынна.
6. Юрлӑр, кулӑр, тантӑшсем,
Вӑйӑ кунӗ çитнӗ чух.
Выльӑр, ӗçлӗр, çамрӑксем,
Сывлӑх çирӗп тӑнӑ чух.

# 48. ТАКМАКСЕМ




1. Ах, тур, тупата,
   Ик урара — çăпата.
   Çăпата мар — атă. } 2 хут
   Манăн савни — ватă. }

2. Ах, ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ,
   Пăхса кăна тăр ĕнтĕ.
   Пăхса кăна тăрсассăн та, } 2 хут
   Манăн савни — çак ĕнтĕ. }

# 49. ИНТЕРЕСНӐ

*(Шӳтлӗ, сатирӑллӑ юрӑ)*




1. Интереснӑ: чӳречерен пӑхрӑм та —
   Ҫерҫи ура хуҫса ташлать,
   Улӑм пӗрчинчен тытса. } 2 хут
2. Татах интереснӑ: чӳречерен пӑхрӑм та —
   Шуркка ура хуҫса ташлать,
   Четвӗрт к(ӗ)ленчинчен тытса. } 2 хут
3. Татах интереснӑ: пирӗн ялти агроном,
   Вӑйлӑ тырпул илес тесе,
   Кунӗн-ҫӗрӗн ҫывӑрать. } 2 хут
4. Татах интереснӑ: пирӗн ялти лавккаҫӑ,
   Шалу укҫи илес тесе,
   Сахӑр ҫумне шыв лартать. } 2 хут

## АНЛАНТАРУСЕМ

Кӗнекене кӗртнӗ 1—7, 9—27, 31—33, 44—50-мӗш юрӑсен кӗввисене М. Г. Кондратьев музыковед, ыттисене урӑх музыкантсем ҫырса илнӗ.

1. 1913 ҫулта Йӑвашкелӗнче ҫуралнӑ, унтах пурӑнакан А. А. Иванова (Лазарева) колхозницӑран 1958 ҫулта ҫырса илнӗ.

2—6. 1910 ҫулта Йӑвашкел ялӗнче ҫуралнӑ, унтах пурӑнса вилнӗ К. Н. Захаровӑран 1958 ҫулта ҫырса илнӗ.

7. 1934 ҫулта Йӑвашкелӗнче ҫуралса, унтах медпунктра санитаркӑра ӗҫлесе пурӑнакан Р. Смирновӑран 1965 ҫулта ҫырса илнӗ.

8—9. 1905 ҫулта Йӑвашкелӗнче ҫуралнӑ, унтах пурӑнакан У. Н. Михайлова колхозницӑран 1963 ҫулта ҫырса илнӗ.

10. 1938 ҫулта Йӑвашкелӗнче ҫуралнӑ, унтах пурӑнакан Г. В. Ермолаева колхозницӑран 1970 ҫулта ҫырса илнӗ.

11. А. А. Иванова (Лазарева) колхозницӑран 1958 ҫулта ҫырса илнӗ.

12. К. Н. Захаровӑран 1958 ҫулта ҫырса илнӗ.

13. К. Н. Захаровӑран 1959 ҫулта ҫырса илнӗ.

14. 1902 ҫулта Йӑвашкелӗнче ҫуралса ӳснӗ, хуласенче пурӑннӑ, яла хӑнана килнӗ М. Е. Чернов 1947 ҫулта юрланине илтсе ҫырнӑ.

15. 1894 ҫулта Йӑвашкелӗнче ҫуралса ӳснӗ, хулара пурӑнакан Г. Е. Чернов 1932 ҫулта юрланине илтнӗ.

16. 1906 ҫулта Йӑвашкел ялӗнче ҫуралнӑ, унтах пурӑнакан А. А. Задорова колхозницӑран 1965 ҫулта ҫырса илнӗ.

17. 1898 ҫулта Альмет районӗнчи Ерспел ялӗнче ҫуралса ӳснӗ, Йӑвашкелӗнче пурӑннӑ В. П. Чернова колхозницӑран 1963 ҫулта ҫырса илнӗ.

18. 1924 ҫулта Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнче ҫуралса ӳссе, Йӑвашкелӗнче пурӑнакан З. П. Майорова колхозницӑран 1965 ҫулта ҫырса илнӗ.

19. Казанка ялӗнче пурӑнакан Маслова колхозницӑран 1968 ҫулта илтсе ҫырса илнӗ.

20. Ку юрра Я. А. Задоров хӑйӗн амӑшӗнчен — П. Н. Задоровӑран (1883—1970) час-часах илтнӗ.

21. У. Н. Михайлова колхозницӑран 1958 ҫулта ҫырса илнӗ.

22. П. Н. Задоровӑран илтсе ҫырнӑ.

23. Ку юрра 1901 ҫулта Аксу районӗнчи Ентрӳсъелӗнче ҫуралса, унтах пурӑннӑ Е. Н. Ендерюковӑран (Баранниковӑран) — Я. А. Задоров амӑшӗн йӑмӑкӗнчен 1960 ҫулта ҫырса илнӗ.

24. 1892 ҫулта Йӑвашкел ялӗнче ҫуралса ӳссе, унтах ватӑлнӑ Л. Н. Ямановран илтсе, 1947 ҫулта ҫырса илнӗ.

25. 1909 ҫулта Йӑвашкелӗнче ҫуралнӑ, унтах пурӑнакан В. И. Гаврилов колхозникран 1960 ҫулта ҫырса илнӗ.

26. А. А. Задорова колхозницӑран 1957 ҫулта ҫырса илнӗ.

27—28. Ку юрӑсене Я. А. Задоров хӑйӗн амӑшӗнчен — П. Н. Задоровӑран час-часах илтнӗ.

29. У. Н. Михайловӑран 1971 ҫулта ҫырса илнӗ.

30. П. Н. Задоровӑран илтнӗ.

31. 1894 çулта Акрелĕнче çуралса ӳснĕ, Йăвашкелĕнче пурăннă И. Н. Димитриева колхозницăран илтсе, 1971 çулта çырса илнĕ.

32. 1905 çулта Йăвашкелĕнче çуралса ӳснĕ, Ентрӳсъелĕнче пурăннă Е. С. Красновăран 1971 çулта çырса илнĕ.

33. Акрел çыннисем — Н. Я. Карпов (1900 çулта çуралнă) тата Д. М. Родионов (1909 çулта çуралнă) юрланине 1971 çулта çырса илнĕ.

34. Е. Н. Ендерюкова колхозницăран 1973 çулта çырса илнĕ.

35. 1912 çулта Йăвашкелĕнче çуралса, унтах пурăнакан О. Е. Васильева (Захарова) колхозницăран 1972 çулта çырса илнĕ.

36. 1915 çулта Йăвашкелĕнче çуралса, унтах пурăнакан Т. К. Гавришовăран 1972 çулта çырса илнĕ.

37. Ку юрра Я. А. Задоров хăйĕн амăшĕнчен вĕреннĕ.

38. 1932 çулта Йăвашкелĕнче çуралса, унтах пурăнакан М. И. Моисеева (Хмелева) колхозницăран 1972 çулта илтсе çырса илнĕ.

39. К. Н. Захаровăран 1958 çулта çырса илнĕ.

40. Я. А. Задоров ку юрра хăйĕн амăшĕнчен нумай хут илтнипе çырнă.

41. А. А. Задорова (1906) колхозницăран 1973 çулта çырса илнĕ.

42. 1923 çулта Йăвашкелĕнче çуралса, унтах пурăнакан Ф. В. Ермолаева колхозницăран 1972 çулта çырса илнĕ.

43. 1911 çулта Акрелĕнче çуралса, унтах пурăнакан А. А. Романова колхозницăран 1971 çулта çырса илнĕ.

44. 1919 çулта Акрелĕнче çуралса, унтах пурăнакан Е. Е. Калмыкова колхозницăран 1971 çулта çырса илнĕ.

45. 1897 çулта Йăвашкел ялĕнче çуралса, унтах пурăннă Е. С. Ларионова колхозницăран 1947 çулта илтсе çырса илнĕ.

46. У. Н. Михайлова (1905) колхозницăран 1961 çулта çырса илнĕ.

47. 1910 çулта Йăвашкел ялĕнче çуралнă К. Н. Захаровăран 1958 çулта çырса илнĕ.

48. 1901 çулта Акрелĕнче çуралнă К. Н. Никифорова колхозница такмакласа панă.

49. 1939 çулта Акрелĕнче çуралса ӳснĕ, Йăвашкелĕнче пурăнакан В. Н. Федотова колхозницăран 1971 çулта çырса илнĕ.

## ТУПМАЛЛИ


Яков Задоров пухнӑ юрӑсем . . —
Ир-ир тӑрса, каҫ-каҫ лартӑм . . 3
Суйлӑр, суйлӑр хӗрсене . . . 4
Пӗлӗтлӗ мар, уяр мар . . . 5
И, кукри-макри — шыв кукри . . —
Ан тух, шапа . . . . . . 6
Кукӑр-макӑр каҫмаран . . . 7
Пӗчӗк кӗпер — кӗпер те мар . . 8
Шӑпчӑк мар, чӗкеҫ мар . . . 9
Тӗпӗр-тӗпӗр ут килет . . . 10
Кил, Кӗркури . . . . . 11
Шӑпчӑк чӗппи мар эпир . . . 12
Туй халӑхӗн юрри . . . . 13
Хӗрҫумсен юрри . . . . . 15
Укӑлчана сӳтрӗм те уя тухрӑм . . 16
Эпир — атте-анненӗн ҫуначӗ . . 17
Лӑпкӑ пулӑр, хуллен ҫӳрӗр . . 18
Вӑрман урлӑ уйӑх каҫрӗ . . . 19
Ҫӳрен утҫӑм халь те ҫӳрет . . 20
Анкартисен хыҫӗнче, лупашкара . 21
Авӑтать-ши куккук, авӑтмасть-ши? . —
Улӑхра хӑмла кӑна . . . . 22
«Утҫӑм лайӑх», тесе эс ан мухтан . 23
Ҫӳллӗ тусем ҫинче пӗр ҫын ҫӳрет . 24
Чупса-юртса килет тур ҫӑрха . . 25
Чупкала-чупкала та ҫырла пухап . 26
Ҫӳҫӗмех те сарӑ пулаинччӗ . . 27
Ах, ах, кӑна тетӗп те . . . . 28
Утҫӑм пымасть тарӑн ҫырмана . . —
Аслӑ ҫул хӗррисем маяклӑх . . 29
Вуниккӗлле явнӑ чӗн нухайкка . . —
Ирхине тӑтӑм, вӑрмана кайрӑм . 30
Йӑран кӑна йӑран ешӗл сухан . . 31
Пичӗкисем тулать те... . . . —
Асататӑр пулсан — халь ӑсатӑр . 32
Силленсемех, кӗпер . . . . 33
Тӑвансем тӑвайккипе ут ҫулаҫҫӗ . 34
Мӗн калаҫар, тӑвансем? . . . 35
Утмӑл хӑлаҫ вӑрман эп кастартӑм . —
Вуникӗ пус — пӗр укҫа . . . 36
Анмӑттӑм эп юханшыв хӗрне . . 37
Аслӑ ҫулпа килет аслӑ апус . . 38
Хитре, хитре . . . . . 39
Пирӗн ҫие телейсем ҫунӑ чухне . 40
Кӑлтӑр кӑна кӑлтӑр сас илтӗнет . 41
Сакӑл тур лаша . . . . 42
Пулли тутлӑ, шывӗ тӑрӑ . . . 43
Выльӑр, ӗҫлӗр, ҫамрӑксем . . . 44
Такмаксем . . . . . 45
Интереснӑ . . . . . . 46
Анлантарусем . . . . . . 47


# ПЕСНИ СЕЛА ИВАШКИНО


Составитель Яков Алексеевич ЗАДОРОВ

Спецредактор **Ю. А. Илюхин**

Редактор издательства А. Н. Андреев. Художественный редактор Е. Е. Михайлова. Технический редактор А. Ф. Никитина. Корректор Р. И. Крысина.

Сдано в набор 3/VIII-1979 г. Подписано к печати 11/XI-1979 г. НТ 26224. Формат 70Х90/16. Бумага типографская № 3. Гарнитура литературная. Печать высокая. Физ. печ. л. 3,0. Усл. печ. л. 3,51. Учетно-изд. л. 2,85. Заказ № 4579. Тираж 2000 экз. Цена 20 коп.

Чувашское книжное издательство, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР, Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

20 пус

ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ

